# КАПКАН




1-мĕш № 1935 ç.

**Çăкăра картăчкăпа сутас йĕркене пăрахăç тунă хыççăн.**

**Ача:** —Мĕн шыран, асанне, есĕ?

**Карчăк:** —Çăкăр черĕчĕ шыратăп, ывăлăм! Шыраса уралан ӳкрĕм, ниçта та тупаймарăм.

# Ҫӗнӗ ҫул кӗтсе илни

**Фантазилӗ калав**

Ку йапала ҫӗнӗ ҫул каҫ пулса иртрӗ. Ун чухне епӗ студентчӗ, Фонтанкӑра, електротехник студенчӗсен ҫӗнӗ ҫуртӗнче пурӑнаттӑм. Инҫтитута кӑҫал вӗренсе пӗтерекен йулташсен пӗр ушкӑнӗ ҫӗнҫул каҫ ман пата пухӑнса ларчӗҫ.

1935-мӗш ҫулта, ҫулла, епӗр инҫтитута пӗтерсе инженер йатне илтмелескерсем, килес ҫул ҫӗнӗ-ҫул каҫ кам ӑҫта пуласси ҫинчен калаҫса карӑмӑр.

Ҫапла калаҫса ларнӑ хушӑра, епӗ йулташсене ҫакӑн пек предложени патӑм:

— Йулташсем,—терӗм,—тавай пӗр-пӗрне ҫакӑн пек сӑмах парӑпӑр: тепӗр ҫулталӑкран шӑп ҫурҫӗр тӗлӗнче кашни радио паракан-илекен станцинче лармала тӑвӑпӑр. Хӑт есӗр кирек-ӑҫти хулара пулӑр, ҫӗнҫул каҫ радиостанцине пырса шӑп ҫурҫӗрте епӗ радио тӑрӑх ҫӗнҫул ҫитнӗ йатпа сире салам калассине кӗтсе ларӑр. Кашнинех епӗ радио тӑрӑх салам калӑп тата сирӗн саламсене ытти йулташсем патне радио тӑрӑх ҫитерсе парӑп.

Манӑн предложенийе пурте пӗр сасӑпах йышӑнчӗҫ. Пӗр йулташ ҫеҫ, манӑн тусӑм Глебов, хӑйӗн кӑтра пуҫне силлесе, кулса йачӗ те, каларӗ:

— Санӑн предложени нийепле те пурнӑҫа кӗме пултараймаҫт вӑл, терӗ аллисене ик кӗсйине чиксе сиксе тӑрса.

— Мӗнле пурнӑҫа кӗме пултараймаҫт-ха?—терӗм епӗ Глебова хирӗҫ.—Сан шухӑшпа, вӗренсе тухсассӑн, кашни хӑрпӑрхӑй хулисене салансассӑн, епӗр пӗр-пӗрне салам йама та манса кайӑпӑр, тетӗн-и.

— Каллех калатӑп—санӑн предложени пурнӑҫа кӗмест, тетӗп,—тет чарӑнма пӗлмен Глебӑв.—Тавлашса пари тытма та пултаратӑп. Есӗ пирӗнтен нихӑшне те лап ҫурҫӗрте ҫӗн ҫул ҫитнӗ йатпа салам калаймастӑн?

Епӗ: калатӑп, тетӗп.

Пари тытрӑмӑр.

Малала килес ҫул ҫӗнҫул каҫ мӗн пулни ҫинчен каласа парам сире.

Ҫулла епӗр инситуран вӗренсе тухрӑмӑр. Кашни инженер йатне илтсе тӗрлӗрен хуласене ӗҫлеме саланчӗҫ. Епӗ ҫеҫ Ленинградра инҫтитут аҫпиранчӗ пулса йултӑм.

Вот, декабӗрӗн 31-мӗшӗнче, тепӗр ҫӗнӗ ҫул каҫ, 2 сехет те 50 минутра епӗ радиоаппарат умӗнче ларатӑп. Радиоаппаратпа пӗрлех пит тӗрӗс ҫӳрекен сехет те хам умрах. Ҫӗнҫул ҫитнӗ йатпа салам йамали йулташсем ҫписки те умрах выртаҫ. Кашнин хушамачӗ тӗлӗнчех вӑл йулташ итлекен радиостанци хумӗн вӑрӑмӑшне паллӑ туса хунӑ.

Ҫписок ҫине пӑхсан, ӗлкӗрме пулӗ-ши кусене пурне те хӑй вӑхӑтӗнче салам каламашкӑн, тесе шухӑшласа илтӗм. Манӑн пӗр 15 ҫын патне салам йамала. Радио хумӗсене улӑштарма та чылай вӑхӑт кирлӗ. Ну, мӗн пулӗ, мӗн килӗ, пурин патне салам ҫитерейместен те, 15-шӗнчен нумайӗшне салам калама ӗлкӗрететӗпех. Глебов: нихӑшин патне те лап ҫурҫӗрте салам ҫитерейместӗн, тесе тавлашаҫ. Кӑтартӑп ӑна ҫитерейместине.

Шӑп 24 сехетре ноль секундра епӗ ҫӗнҫул ҫитнӗ йатпа чи первӑй Мускаври йулташ патне салам йатӑм.

—У-у-у,—терӗ Мускаври йулташ, епӗ салам йанине илтсен,—есӗ хӑвӑн саламупа пӗр ҫур сехете йахӑн кайа йултӑн. Мускавра ҫӗнҫул ҫитни ҫур сехет.

Тен, унӑн сехечӗ тӗрӗс мар ҫӳрет пуль... Анчах манӑн шухӑшласа тӑма вӑхӑт ҫук-ха. Епӗ Саратӑври йулташа саламлатӑп халӗ.

Хирӗҫ лах-лах-лах кулса шӑхӑрса йанине илтетӗп:

— Саратӑвра ҫӗн ҫул ҫитни сехет ҫитрӗ!..

Епӗ сасртӑк пӗтӗмпех ӑнланса илтӗм. Мӗнле ухмах пулнӑ-ха епӗ Глебовпа пари тытсах тавлашма шухӑш тытса. Ленинградрипе выранти вӑхӑтсем хушшинчи ӑрасналӑхсене мансах кайнӑ мӗн епӗ пари тытнӑ вӑхӑтра. Паллах, ун ҫинчен епӗ пӗлнӗ. Пӗлнӗ пулсан та манса кайнӑ.

Манӑн ӗнтӗ ним те тумали йулмарӗ, выранти вӑхӑтсене тӗрӗслес тӗлӗшпе те пулин ыттисем патне салам йарса пӑхасси ҫеҫ йулчӗ.

Ҫвердловск мана ҫӗнҫул ҫитнӗренпе икӗ сехет вӑхӑт иртрӗ, тесе пӗлтерчӗ.

Омскӑри ҫилӗлӗ йулташ:

— Кам ҫурҫӗр иртни виҫ сехетре вӑратаҫ-ха мана, терӗ.

Хабаровскӑри йулташваскавлӑн ответ пачӗ:

— Тав тӑватӑп. Ирхи чей ӗҫетӗп-ха. Ӗҫлеме кайма васкатӑп. Халӗ 7 сехет.

Врангӗл утравӗ ҫинче хӗл каҫакан йулташ,—санӑн салама ирхине 10 сехетре апат ҫисе ларнӑ вӑхӑтра илтӗм!—тесе пӗлтерчӗ.

Иркутскӑри йулташ:

—Ирхине 5 сехетре тин есӗ ҫӗнҫул тапранчӗ тесе ман пата салам йама шухӑш тытнӑ,—терӗ кӑмӑлсӑр саспа.

Вара епӗ радио хумӗсене хӗвеланӑҫ йенеле йатӑм. Кунта та телей пулмарӗ мана.

Берлинри йулташ мана:

— Есӗ ҫӗнҫул йачӗпе ытла васкаса салам йатӑн. Пирӗн халӗ 1935-мӗш ҫулхи декабӗрӗн 31-мӗшӗнчи 23 сехет ҫеҫ, терӗ.

Унӑн отвечӗ мана кӑштах шанчӑк кӳртсе пачӗ. Берлинра шӑп ҫурҫӗр ҫитмели вӑхӑтра ун патне кунтан салам йамала пулаҫ, терӗм, Анчах ку шанчӑк та нумайа пымарӗ. Ара Берлинри вӑхӑтпа 24 сехет пулнӑ чухне, пирӗн Ленинградри вӑхӑт ҫурҫӗр иртни пӗр сехет пулаҫ. Ленинградри вӑхӑтпа шӑп ҫурҫӗрте йамалаҫке-ха манӑн саламне.

Ҫапла вара никама та хам йулташсенчен ҫӗнҫул ҫитнӗ йатпа шӑп ҫурҫӗрте салам йарса савӑнтарайымарӑм. Глебовпа пари тытса хам йулташсем умӗнче намӑс курса пӗтни ҫеҫ пулчӗ.

А. Бельайӗв.

# Тултан лайăх — шəлтан йапăх

Хăшпĕрисем çамрăк выљăхсене пўртре усраса хĕл каçараççĕ.



— Ах, çук турă çырлахах! Ку лайăх пўрте хваттере кĕрсе выртас, терĕм. Чўречинчен мăйракалисем пăхаççĕ.

## Вутпуççисем

* Кăштăр-кăштăр сĕтрĕнсе пыраť Уйкас йалсовечĕ Вăрнар рəйонĕн хўринче. Кăштăр-кăштăр туни пĕтĕм республикипе илтĕнет. Унпа пĕрлех йалсоветра ĕçлекенсем Зайцевпа Филиппов бутылкăсенчен ĕçнĕ чухне буљ-буљ буљ тутарни пĕтĕм таврари йалсене илтĕнет. Хăçанчен çав сассем хăлхана илтĕнсе йўçĕхтерсе тăрĕç?

* Вăрмар районĕнчи Чупай йалĕнче выљăх-чĕрлĕхсем çĕхĕрни таçта çитиченех илтĕнет. Пусаççĕ вĕсене хуçисем. Йалсоветĕ выљăхсем çĕхĕрнине илтес мар тесе, хăлха шăтăкĕсене мăкпа питĕрсе ĕçлесе лараť. Мăк вигĕр илтĕнмест-ши?

Ганин.

* Шĕнерпуçĕнчи (Сĕнтĕрвăрри районĕ) „Муравейник“ колхоз тислĕк тумали çĕнĕ май шухăшласа кăларнă. Çав майпа икĕ лав тислĕке тийенĕ те, уй хапхи патне йăвантарнă. Икĕ лав тислĕкрен килес çул 15 лав вырса илессе кĕтеççĕ.

Павăл Вискер.



*А. П. Чехăв*

**Чехăв Антон Павлович çурални кăçал йанвар уйăхĕнче 75 çул тултарчĕ (1860 мĕш çулта çуралса 1904-мĕш çулта вилнĕ вăл). Чехав хăй пурăннă тапхăрти Раççейăн киревсĕрлĕхĕсене кăтартса пит нумай паха**



**произведенисем çырса хăварнă. Чехăв çырнисемпе халĕ епĕр кивĕ йăласене пĕтерес, мешченлĕхе, культурсăрлăха тĕп тăвас. „хупăлча“ ăшĕнчи çынсемпе кĕрешес çĕрте усă куратпăр.**

Сут çледоватĕлĕ умĕнче улача кĕпелĕ, çĕтĕк пушмаклă питех те ырханка, пĕчĕк çеç мужик тăрат. Унăн çăмламасланса кайнă, шатра çисе кайнă пичĕ тата усăнса аннă çăра куç харшийĕсем айĕнчен аран курăнакан куçĕсем сăн-сăпатне тĕксĕмлĕ сивĕ параççĕ. Пуç çинчи такçанах тураман, тăрмаланса ларнă, çĕлĕк пек выртакан çÿçĕсем ун çине тата нумайрах ерешменĕнни пек сивĕлĕх çаптараççĕ. Вăл çара уранах.

— Денис Григорйĕв!—тесе пуçлат çледоватĕлĕ.—Кунтарах куç та, ман ыйтусене хирĕç каласа пар. Чугунçул хуралçи Иван Çеменов Акинфов, çакă ийулĕн çиччĕмĕш чыслинче ирхине лини тăрăх пынă чухне, 141-мĕш çухрăмра, сана рельсăсене шпалсем çумне çыпăçтаракан гайкăна пăрса кăларнă вăхăтра тытнă. Акă вăл, çав гайкă!.. Çав гайкăпа тытнă ĕнтĕ сана. Çапла пулни вăл?

— Мĕ-ён?

— Çакă пĕтĕмпех Акинфов каланă пекех пулни тетĕп?

— Знамо, пулнă.

— Йурат; ну, мĕн тума гайкăна кăларса илесшĕн пулнă есĕ?

— Мĕ ён?

— Хăвăн „мĕн-не“ пăрах-ха есĕ, ыйтнине хирĕç кала; гайкăна есĕ мĕн тума кăларса илесшĕн пулнă?

— Кирлĕ пулман пулсан, пăрса та кăларас çук та,—тесе мачча çинеле чалăшăн пăхса, хăрăлтатат Денис.

— Мĕн тума сана çав гайкă кирлĕ пулнă?

— Гайкă-и? Ара гайкăсенчен епĕр путлавсем тăватпăр

— Камсем вара—„епĕр“?

— Епĕр, халăх... Климоври мужиксем ĕнтĕ.

— Игле-ха, тăвавăм, ан ухмаха персе тăр ман умра, толкăлăн кала. Мĕн путлавсем çинчен суйса тăратăн кунта!

— Мĕн çуралнăранпа суйман, а кунта суйатăп...—«уçĕсене мăч-мăч хупса мăкăртатат Денис —Путлавсăр ăçтан май пулĕ, ваше благороди Ешĕли есĕ сĕлĕ пулли йе мăн ăман вăлта вĕçне лартатăн пулсассăн, путлавсăр вăл шыв тĕпнел кайат-и вара? Суйатăп...—тесе кулса илет Денис — Шуйттан тăвас-и унпала, сĕлĕ пуллипе, çийелте çеç ишет пулсассăн. Уланкă, çăртан, шампа пул кирек хăçан та тĕпрен пырат, çийелтен ишекен нине шилишпйор сăхса илсе кайат кăна, вăл т хутран ситрен çеç: пирĕн шывра шилишпйор пул маст... Вăл пулă ирĕке йуратат.

— Мĕн тума есĕ мана шилишпйор çинчен каласа тăратăн?

— Мĕ-ён? Ху вĕт ыйтатăн есĕ. Пирĕн господасем те çапла тытаççĕ. Чи ăссăр ача та путлавсă тытас çук сана. Конешнă, кам пĕлеймест, ну вă путлавсăрах тытас, тейĕ. Ухмахшăн закон çырма

— Апла есĕ гайкăна унтан путлав тăвас тес пăрса кăлартăм тетĕн еппин?

— Мĕн тума тата? Бабкăла выльама мар ĕнтĕ.

— Путлав тума тăхлан, пуля, пăта... мĕнлине т пулин тупса илме пултарнă есĕ...

— Тăхланне ҫул ҫинче тупаймăн, укҫа парса илес пулаť. Гайкăран лайăххине тупаймăн ĕнтĕ. Йăвăр та, шăтăкĕ те пур унăн.

— Мĕнле ухмаха перет вăл. Пайан ҫеҫ ҫуралнă, йе пĕлĕт ҫинчен ӳкнĕ пек. Ăнланмастăн-и вара есĕ. ухмах пуҫ, пăрса кăларни мĕн патне илсе пынине? Хуралҫă ан асăр-ха анчах, пойăс релъсăсем ҫинчен тухса кайма пултараччĕ, мĕн чухлĕ ҫын вилеччĕ. Есĕ етемсене вĕлернĕ пулăттăн.

— Турă сыхлатăрах, ваше благороди! Мĕншĕн вĕлерес. Тĕне кĕмен ҫынсем-и мĕн епĕр, йе тискер усалсем. Тав сана турă, лайăх господинăм, ĕмĕрĕме пурăнса иртгертĕмĕр, вĕлерме мар, ун пек шухăшсем пуҫăмра та пулман. Турă амăшĕ ҫырлахтăр, ҫăлтăрах... Мĕн калаҫан апла?

— Сан шухăшпа мĕншĕн пойĕ:сен крушени пулаť. Ик виҫ гайкине пăрса кăлар та вот сана вара крушени те.

Денис кулнă пек пулаť те, куҫĕсене ĕненмесле хĕссе ҫледователĕ ҫинеле пахаť.

— Ну! Миҫе ҫул мĕн пур йалĕпе гайкăсем пăра-пă а кăларса пурăнатпăр та, турă сыхларĕ-ха. . ес крушени, тетĕн... ҫынсене в-леретĕн., Епĕ релъсине йăтса кайнă пулсассăн, йе калăпăр, унăн ҫулĕ ҫине пĕрене пырса хунă пулсассăн, ну ун чухне, пойăс пăрăнса кайма пултараť, а то... тфу—гайкă!

— Ăнлансам ĕнтĕ, релъсăсене шпалсем ҫумне гайкăсемпе ҫирĕплетеҫҫĕ.

— Ăна епĕр пĕлетпĕр... Епĕр пурне те мар вĕт пăрса кăларатпăр... хушăран хăваратпăр... Ассăр хăтланмастпăр ĕнтĕ... ăнланатпăр.

Денис анаслаť те туги ҫине хĕрес хываť.

— Пĕлтĕр пойăс релссем ҫинчен тухса аннăччĕ кунта,—тет ҫ едователĕ.—Халĕ паллă ĕнтĕ мĕншĕнни...

— Мĕн тетĕн?

— Халĕ паллă ĕнтĕ, тет п, пойăс пĕлтĕр мĕншĕн релсăсем ҫинчен тухса кайнине. Ăнлантăм епĕ.

— Ҫавăнпа вĕреннĕ те есĕр, ырă ҫынăмăрсем, ăнланма пултарас тесе... Тур ă пĕлет кама ăнлав памалине. Акă есĕр мĕн, мĕне пĕлтернине тупса хутăр, хуралҫă вăл пирĕн пекех мужик те, ним те ăнланма пĕлмест, ҫухаран йарса тытаť те, сĕтĕрсех кайаť. Каларăм—мужик, ăсĕ те мужикла... Ҫырса хур-ха, ваше благороди, унпа пĕрлех, вăл мана ик хутчен шăл тăрăх ҫиҫҫе йачĕ, тата кăкăртан та.

— Сан патра обыск тунă чухне, та а тепĕр гайкă тупнă... Ҫавна хăш вырăнта тата хăҫҫан пăрса кăларнă ха есĕ?

— Есе леш, хĕрлĕ арча айĕнче выртакан гайкă ҫинчен-и?

— Вăл сан хăш тĕлте выртнине пĕлместĕп, анчах тупнах ăна. Хăҫан пăрса кăларнă есĕ ăна?

— Пăрса кăларман ăна епĕ, ăна Игнашка, чапăш Ҫемен ывăлĕ лачĕ мана. Ку ĕнтĕ арча айĕнче выртни ҫинчен, тата леш, килкартинчи ҫунашĕнчине, епĕр Митрапанпа пĕрле пăрса кăлартăмăр.

— Мĕнле Митрапанпа?

— Митрапан Петровпа... Илтмен-и мĕн. Пратнĕксем тăваť вăл пирĕн, господасене те сутаť. Ăна ҫав гайкăсем пит нумай кирле пулаҫҫĕ. Кашни хатьĕк валъҫи, калăпăр, пĕр вуннă штук...

— Игле ха... Уложени о наказаниях 1081-мĕш статйи калаť, мĕн... тет... пĕле тăркач чугунҫула мĕнле те пулин сийен тунăшăн, ун пирки ҫав ҫулпа пыракан транспăрта инкек кӳме пултараť пулсассăн, тата айăплă ҫынни ун пек тунă хыҫҫăн шар пулассине пĕлнĕ пулсассăн... ăнланатни пĕлнĕ пулсассăн! Ун пек пăрса кăларни мĕн патне илсе пынине пĕлмесĕр тăма пултарайман есĕ... ăна ĕҫлеме каторкăна йамала тăваҫҫĕ.

— Паллах, есĕр лайăхрах пĕлетĕр... Епĕр тĕттĕм халăх... пĕлместпĕр и мĕ-?

— Ес пурне те пĕлетĕн! Есĕ суйатăн, йури пĕлмен тăвасшăн!

— Мĕншĕн суйас? Йалта ыйтăр хăť, ĕненместĕр пулсассăн... Путлавсăр уклейкă тытаҫҫĕ, тата уитан та начартараххине - ыраш пĕтрине, вăл та путлавсăрах тытăнас ҫук сана.

— Ес тата шилишпйор ҫинчен каласа тăр,—тесе тутисемпе кулса илет ҫледователĕ.

— Шилишпйор пурăнмаť пирĕн... Вăлта ҫиппине шыв ҫийĕн лĕпĕшпе, путлавсăрах йаратпăр та, партас кĕрет, вăл та сайра хутра ҫеҫ.

— Ну, шăп пул!

Шăплăх пулчĕ. Денис пĕр ури ҫинчен тепĕр ури ҫине тайăла тайăла тăраť, симĕс пуставлă сĕтел ҫине пăхаť, куҫĕсене, хăй умĕнче пустав мар, хĕвеле курнă пеклĕн мăч-мăч вылъатаť. Ҫледователĕ васкавлăн ҫыраť.

— Манăн кайас-и?—тесе ыйтаť Денис кăштах чăп пулса тăнă хыҫҫăн.

— Ҫук! Манăн сана хурал аллине парса тĕрмене ăсатмала.

Денис куҫĕсене мăч-мăч тума пăрахаť, хăйĕн ҫăра куҫ харшисене хăпартса, чиновник ҫине ыйтулăн пăхаť.

— Мĕнле апла, мĕнле ха тĕрмене? Вашĕ благороди! Манăн вăхăт ҫук, манăн йармăрка тухса каймала, Йукуртан шăн ҫушăн виҫĕ тенкĕ илмеле.

— Ан шарла, ан чăрмантар...

— Тĕрмене... Мĕншĕн те пулсан йурĕччĕ, кайăттăмччĕ, а то ахалех... нимĕн ĕҫсĕрех... Мĕншĕн? Вăрламанччĕ никак, ҫапăҫман. Недоимкă пирки иккĕленсе тăратăн пулсан, ваше благороди, старăстăна ан ĕненĕр.., Господин непременнай член тан ыйтăр.. Хĕресĕ те ҫук унăн, старăстăн...

— Ан чĕн!..

— Ахалъ те чĕнместĕп...—мăкăртатаť Денис.— Старăстă учотра суйса кăтартнине, епĕ хăт причак тытса... Пирĕн виҫ тăван: Куҫма Григорйев, стало быť, Йегор Григорйев, тата епĕ, Д нис Григорйев...

— Есĕ мана чăрмантаратăн.. Ей, Ҫемен!—тесе кăшкăраť ҫледователĕ.—Ҫавăтса кайăр ҫавна.

— Пирĕн виҫĕ тăван,—мăкăртатаť Денис, икĕ матур салтак ăна тытса камĕрăран ҫавăтса тухнă чухне.—Тăваншăн тăвана ответ тыттармала мар... Куҫма тӳлемест, Денис —ответ тыт... Сутйесем теҫҫĕ!.. Вилĕ пулнă улпут—йăнăрал вилчĕ, ҫӳлти патшалăх пултăр ăна, ахалĕн кăтартнă пулĕччĕ вăл сире, сутйесене!... Сут тума пĕлес пулť, шалттай-палттай йурамаť... Хулăпах хĕне хăť, анчах ĕҫшĕн пултăр, совĕҫ хушнă майлă пултăр...

**М а м и** куҫарнă.

# Ĕне

— Укахви инке сĕт чĕресне аллине тытнă та васкаса пÿрте чупса кĕнĕ.

— Ах!—тенĕ вăл упăшки çине пăхса.—Инкек! Инкек килсе çакланчĕ пирĕн çине. Уртем, илтместĕн-и мĕн, сана калатăп, хăлхуна мăкпа питĕрсе хумарăн пулĕ-çке!

— Епĕ илтместĕп-и? Епĕ илтетĕп-ха,—тенĕ ним хускалмасăр кăмака çинче выртакан Уртем,—сан чĕлхÿне нимĕр çыпăçнă пулмала: выҫатăтан-выҫатăтан ăна, ним те ăнланаймастăп.

— Ĕне выртнă.

— Выртнă пулин.

— „Выртнă пулин". Чирлĕрен выртнă. Чĕрес йăтса тухрăм та, пăхатăп,—ĕне каска пек тăсăлса выртнă. Апла та, капла та тĕртсе пăхатăп, нимпе те тăмасть.

— Малтанах çапла каламалаччĕ,—çилленчĕ Уртем.—Кайса пăхас еппин картана,—терĕ кăмака çинчен анма тесе урине тăсса.

Кĕрĕкне тăхăнать те, килкартине тухать. Анчах çийĕнчех чупса кĕрет.

— Чăнах чирленĕ. Выҫăх тухтăрĕ патне каймала. Унта каймасан май килес çук.

— Лашине кÿлетĕн пуҫ апла?

— Лашине. Ухмах, ухмах, кам каçа хирĕç тухтăр патне кайать. Асран тухнă çын мар-ха апла тума. Ыран тул çутăлаччен пуçтарăнса тухкаласа кайăп.

Уртем тепĕр ирхине кăвак çутăлах тăрать те, пăрçа нимри çисе тăраннă хыççăн, лашине кÿлсе тăратать. Кÿлнĕ хыççăн çуни çумĕнче пуçне хыçкаласа тăрса пĕлĕт çинеле пăхкаласа илет. Унтан пÿрт чÿречинчен шок-шок тутарать пушипе:

— Укахви, тух-ха, лаша тăвар-ха!—тет.

— Ай каймастăн?—тĕлĕнсе ыйтнă Укахви.

— Кунĕ пайан мĕнле!—тенĕ çилленсе Уртем.— Тунти кун. Йăвăр кун. Кайсан та телей пулас çук. Йе тухтăр килте çук тĕле пулăн и, йе тата урăх усал тĕлне... Ыран кайатăп.

— Ĕни мĕнле вара? Выртмаллипех выртать вĕт!

— Выртин. Есĕ ăна ăшă шыв ĕçтер. Тен уçăлĕ. Ыран йăтса тăратăпăр.

Ытлари кун Уртем килкартине тухать те, ĕни çине пăхса арăмне калать: йăнăшсах выртать вĕт ĕни. Ирхине кайма нийепле те май килмест-çке. Пĕлĕтсем тухнă, çилтăман ашкăнса кайасран хăрамала. Çул çинче çухалса кайсан лашуна та çĕтсе хăварăн... Çапах та кăвтарла тĕлнеле кÿлсе тухса каймала тăвасах-чĕ. Ĕне вăл мăн выҫăх. Вилсен тупса илеймĕн. Каймасан вилсе выртма та пултарать.

— Ех, мĕнле етем ес!—тарăхнипе кăшкăрса йанă Укави. Пушăпа ислетсен те ес килтен тухса кайас темĕн. Кÿр хам кайса килем.

— Хĕрарăм пуçупа-и?—тенĕ йĕрĕнчĕклĕн кулса Уртем.—Тухтăрпа калаçма ăçтан пултаран ес. Кăнтăрла иртерехпе хамах кайăп.

Кÿршĕ ачи Ваçça пÿрте чупса кĕрет те чĕвĕлтетме тытăнать.

— Уртем пичче, атте чĕнет. Ăш сăра ĕçмеле, тет.

— Пыраймастăп пулĕ,—терĕ ĕнсине хыçса Уртем,—тухтăр патне каймала.

Унтан кăштах шухăшласа тăрсан:—наччаслăха пырăп еппин...

— Ах, шуйтан çăпали,—тесе кăшкăрса тăкнă упăшкине Укахви,—каллех ĕçке, сана йăхăр кăна...

— Çитĕ калаçса тăма,—килĕшес кăмăлпа каларĕ Уртем,—пĕр минутлăха кăна. Минут хушшинче ĕнÿ вилсех выртас çук-çке.

Киле Уртем çĕрле тин таврăнать. Сулăна-сулăна кайса пÿрте кĕрет. Укахви кăмака çинче йĕрсе выртать.

— Йĕрме кирлĕ мар,—тет кăмăлăн Уртем,—ак тăлăп тăхăнатăп та лаша кÿлсе тухтăр патне кайатăп. Кирлĕ пулсан пĕр лав тулли тухтăрсем илсе килем...

— Чĕлхÿ çине çăпан тухасчĕ!—кăшкăрса йанă Укахви.—Халĕ ниçта та каймала мар...

— Каймала мар пулсан аван. Каларăм хăйех сывалать тесе. Ĕни пирĕн вилекенскер марччĕ-ха.

— Вилекенскер мар,—уласа йанă Укахви—Ех, пулать çав етем. Енÿ вилнĕ вĕт!

Уртем темиçе çекунд хушши ним чĕнмесĕр тăчĕ те, чăр пăхса илчĕ арăмĕ çинеле. Унтан пуçĕ çинчен çĕлĕкне хывса урайне пăрахса йачĕ те, çилтăман пек пÿртрен чупса тухса пĕтĕм урам илтмеле уласа йачĕ:

— Халăх! Тăвансем! Йултăшсем! Манăн ĕне вилсе выртнă. Пĕтрĕм епĕ. Йăвăр тунтикунсемпе çилтăмансем пиркийех пĕтрĕм. Кахалăм ман пит нумай.

Анчах урамра никам та ăна илтекен пулмарĕ.

Карпов.

# Чирлĕ чĕлхе

Жорж пайан шкула кайман.
Çухăрать: аннеçĕм, епĕ сывă мар!
Амăш тухтăра чĕнсе пырать.
Тухтăр Жоржăн кăкрипеле çурăмне те хыпашлать.

— Лайăх,—тет,—матур ача çине пăхма.
Уç-ха çăварна, кăтарт-ха чĕлхÿна.
Тен май пулĕ чир-чĕрна курма...
Хĕпхĕрлех хĕрелнĕ Жорж. Пит намăс пулнă ав ăна.

— Да,—тет,—пĕтĕм чирĕм чĕлхерех çав ĕнтĕ ман.

Вырăсла чĕлхе урокĕнче ыйтсан,
Мĕн калас-ха учитле пайан.
Вĕренмен еп панă урока.
Пĕлтĕн есĕ ман чире, кукка!

М. Андрейĕвскайа.

## Чĕрĕлсе пынă.

— Ĕнер каçхине Мархва упăшки вилнĕ, тет.

— Мĕнле апла?! Епĕ хаҫ анчах ăна кооперативра черетре тăнине куртăмçке!

— Апла пулсан, чейескер, кооператива ерешсе илсе килнине пĕлсен, вилнĕ çĕртенех чĕрĕлсе тăрса пынă еппин.

# Аратлă ĕне



— Пур ĕнесене те ман чухлĕ сĕт тума социалисăмла ăмăртува чĕнетĕп.

# Тĕпсĕр кăмăлпа.

„Кахалăн куçĕ тулли тирĕке курать".
Марисен халаплăхĕ.

Вăл тăракан сăртăн сулахай йенĕпе Атăлтан та пысăк шыв тăрна куçĕ пек йухса выртнă. Аслă шывăн çыранĕ хĕррисемпе мегр тăрăшĕ, сулçăлă йăвăçсем, егем кĕлетки пысăкăш чечек тĕмĕсем ӳссе ларнă. Унăн иртнĕ ернере çеç сырнă çăпатийĕсем йака сукмак çине шап-шап! пусса темĕнле тĕрлĕ сăрпа сăрласа илемлетнĕ хапха умне илсе çитернĕ. Çав алăкăн çийĕнче Петĕр Кĕркурчăн виçĕмçул çеç хăйĕн хутпĕлменлĕхне пĕтернĕ куçĕсем темĕнле вывĕскăна курах кайнă.

— Тăхта-ха,—тенĕ вăл хăйне,—вуласа пĕлес ăна. „Сат пахча столовăй",—тесе çырнă пулнă вывĕскинче.

— Мĕнле капла,—тĕлĕннĕ вăл. Йăнăшатăп пулĕ, тесе пĕре çывăхах пырса вуласа пăхнă Петĕр Кĕркурчă, тепре калле чакса кайса, инçетрен вуласа тухнă, пур-пĕрех: „Сат-пахча столовăй".

— Хăйаматла пултăр, кĕретĕп!—тенĕ вăл йулашкинчен, алăкăн çутă хăлăпĕ çине аллипе пусса. Тем пысăкăш алăк, Петĕр Кĕркурчăн тăнăлнă мăн хапхи пек чăриклетсе уçăлас вырăнне, илемлĕрен те илемлĕ музык каласа уçăлса кайнă.

— Ах!—тенĕ Петĕр Кĕркурчă,—ах! Ăста лекрĕм епĕ. Йăвăçсем!.. Улмисем!. чечексем!.. Ах!—Тĕлĕнмелех пулнă Петĕр Кĕркурчăн.

Анчах, вăл пĕгĕм çанçурăмĕпе тĕлĕнсе илме те елкĕреймен, унăн умне кăтра çӳçлĕ, хура куç харшилă майра çитсе тăнă.

— Ырă сунса кĕтетпĕр! — тенĕ вăл илемлĕ тутисене выльатса. Петĕр Кĕркурчă хăйне савăнса йышăннине кура хăйĕн мĕнле çĕршыва лекни çинчен ыйтса пĕлессине те мансах кайнă. Унăн тутисем пĕре кулан пек тунă—кулли тухман, пуçĕ тем шутлам пек тунă—шутласшăн пулман, чăхăмланă.

Сахал иртни вăхăт ку хушăра, нумай-и,—ун çинчен çырмăпăр. Иртнех ĕнтĕ вăл, ылтăн пек хаклă вăхăт. Çак хаклă вăхăт иртнĕ май, Петĕр Кĕркурча та хай хитре хĕр йака сукмак тăрăх пахча варрипеле илсе кайнă

— Ай, килĕрех! Иртсе ларăр,—тенĕ вĕсене хирĕç пулакан çынсем.

Вара Петĕр Кĕркурчăна та лĕпĕш пек шап-шурă тумланнă арçынсемпе хĕрарăмсем хушшине пырса лартнă.

— Ах, илемлĕске,—тенĕ вăл тĕлĕнсе,—пăх-ха, сĕтелисене йепле йывăçсем айне тунă. Ех, кунта епĕ пĕре ним ĕçлемесĕр çисе пурăнса Васли мучи сысви пек самăрлăттăм!..

Петĕр Кĕркурчă таврала пăхса тĕлĕнсе ларнă хушăра хитре хĕрсем ун умне: пăсланакан какай йашки, сарă çу пек булкă, коклет, колбасы, печени, какао пырса лартнă.

— Çийĕр ĕнтĕ,—тенĕ пĕр хитре хĕрĕ Петĕр Кĕркурча.

Çиме тытăнас тесе вăл кашăка йăтнă пулнă. Аху! Ак тĕлĕнтермĕш! Какай йашкисем, кĕселсем пĕри те тарелкă ăшĕнче пулман—панулми хуппи пек хупă ăшĕнче.

— Чыслаç тĕк тутлă пулмасан та çийесех пулать,—пăшăлтатнă сăмси айĕнче. Унтан вĕри йашкине лĕпĕрт! сыпнă, лĕпĕрт! Йашки тарелка ăшĕнче мар пулсан та çав тери тутлă пулнă. Петĕр Кĕркурчă халиччен çимен йашка!

— Мĕнген пĕçернĕ-ши кăсене?—тенĕ вăл панулми пек улма ăшĕнчи тутлă чейе печенипе çыртса çинĕ май. Тĕлĕннĕ Петĕр Кĕркурчă. Какай йашки улми, чей улми, печени улми çумĕнчи симĕс çулçăсем, чечексем татах тĕлĕнтернĕ

— Халĕ ĕнтĕ çисе тăрантăм, пахча тăрăх кайамха,—тенĕ вăл, халиччен курман апатпа тулнă хырăмне аллисемпе шăлкаласа:—таса сывлăшпа сывлам!..

Вăл пахчари сукмак тăрăх пĕчченех утса пынă. Унăн умĕнче темĕнле-темĕнле йăвăçсем, халиччен етем курман çырласем, панулмисем ӳссе ларнă. Чĕнгĕрлĕ-чĕнгĕрлĕ çулçăсем çырлисене хупăрласа тăнă.

— Тăхта-ха, —тенĕ Петĕр Кĕркурчă,—пĕрне çыкуриччен татса илсе çийем! Çат! тагса илнĕ вăл. Унган çиме пуçланă.

— Ах!—тенĕ вăл.—Ах! епĕ паçăр çинĕ булкă йăвăç çийĕнче ӳснĕске! Йашки те, колбаси те, печени те, пĕремĕкĕ те йăвăç çийĕнчех ӳснĕ-ши?

Вара Петĕр Кĕркурчă йăвăçсем хушшине кĕрсе кайса пĕремĕкне те, канфеткине те, шушкине те йăвăç çинчен панулми татнă пек татса çинĕ.

— Интереснă —тенĕ кашни çыртмасĕренех,—вăт Татйанана çитерсе пăхтарасчĕ, мĕнле вăл тĕлĕнĕ. Хамăн пахчара ӳстересчĕ ку йăвăçсене, вара ним ĕçлемесĕрех ĕлĕкхи мул хуçисем пек пурăнаттăм. Тухса выртăттăм та, снаш, йăвăç айне, ĕмĕлсе хай халăх тырă вырнă вăхăтра:—есĕр ĕçлĕрех колхозра, епĕр ĕçлемесĕрех...—тейĕттĕм çеç йăвăç çинчен хаљ çеç татнă чейпе печенине çыртса çисе Интереснă! Нумай шутласа утнă вăл. Пысăк шухăшсем айне пугнă Петĕр Кĕркурчă çапла утса хăй вĕри йашкасем ӳсекен йăвăçсем айне çитнине те сисеймен. Шухă илама авантарах пулăр тесе, пуçне пĕлĕт çине каçăртса тăнă хушăра, пиçсе çитнĕ йашки çат таталнă та, çĕре ӳкекенскер Петĕр Кĕркурчăн йанахне çигсе çапăннă Пăсланакан вĕри йашка Петĕр Кĕркурчăн кăкрине пĕр самантрах чăр! пĕçертсе йанă.

— Ай, тенĕ Петĕр Кĕркурчă:—ай!

Ай, тенипех Петĕр Кĕркурчă шарт сиксе вăранса кайать:

— Ах, мур чĕлĕмĕ, чут сухала çунтарса йараччĕ,—тенĕ пулĕ вăл çăварĕнчен кăкри çине тухса ӳкнĕ чĕлĕмне урай варнеле ывăтса йарса.

— Да,— тенĕ вăл айне сарнă кĕрĕкне пуçтарса,—аванччĕ апла пулсан та, анчах... Ех, ĕçлесех пулать çав! Çĕнçул каçхи тĕлĕк те хамран кулнă пек йашкана тирĕкрен çитермерĕ. Тфу!

Вăт вулакансем, кăна епĕ чăн пулнă, тесе çырма пуçланă. Çыратăп та, çыратăп Петĕр Кĕркурч çинчен, а вăл кăçал колхозра йурийех ĕçлемен те, тырă та илеймен, хăйĕн выçă хырăмĕпе çапла шутласа выртнă мĕн çĕнçул каç шелљм старикĕ. Унăн ĕçлемесĕрех тăранса пурăнасс килнĕ мĕн.

Ех, Петĕр Кĕркучă, ĕçлемелех пулать пулљ сан

И. Кашлинк

# Машинсен выставки

— ГОРПО, есӗр одеколон, пудрӑ, шакӑр-макӑр сӗмпе кӑна сутӑ тӑватӑр. Колхозсене машинсем кирлине курмастӑр... Пуртӑпа ҫилос тураҫҫӗ, кӗреҫепе ҫӗрулми кӑлараҫҫӗ. Тавайӑр, кӳрсе килӗр машинсем,—панӑ наказ Йетӗрне райҫӗрпайӗ Горпона.

Мӗнле ку йапала: „коопераци социалисӑм патне каймали ҫул" тенӗ. Сначчӑт социалисӑм тӑватпӑр епӗр те. Машинсем кӳрессипирӗн ӗҫех те мар вӑл: ку тӗлӗшпе ӗҫлекен йатарласа тунӑ „Сельхозснаб" текенни пур,—тӗлӗнсе шутланӑ Горпорисем.—Тӑвас пулат, раз пуҫлӑх хушат,—кӗҫӗтмен ҫурӑмӗсене хыҫкаласа килӗшнӗ йулашкинчен.

Йумахри пек: „каланӑ тунӑ" тенӗ пекех пулман, анчах йумахринчен нумайах уйӑрӑлса тӑман. Иртнӗ ҫураки иртсен тин сӗтрӗнсе ҫитнӗ машинсем.

— Машинсем! Хайхи лешӗ епӗр панӑ авансемшӗн Горпо машинсем кӳрсе килнӗ,—хавасланнӑ колхозниксем.

Вӗҫтернӗ вара колхозникиксем Йетӗрнене машинсем илме.—Ай „турӑ усрасси чунне", машинсем кӳрсе килнӗ пулат те,—мухтанӑ колхозниксем Горпо тенине.

Ҫитнӗ, пӑхнӑ, тӗлӗннӗ...

— Шуйтан мар пулӗҫке ку? Мӗскерле мыйракалӑ кустӑрма ку?—ыйтнӑ колхозниксем.

— Ҫӗрулми лартмали вӑл, ку тата ҫӗрулми кӑлармали,— ӑнлантарнӑ колхозниксене горпорисем, машинсене хайсем те пайан кӑна курнӑскерсем.

— Ку тата хӑш Атӑл тӗпне путнӑ пӑрахутӑн кив йакӑрӗ?—Ыйтнӑ татах колхозниксем.

— А вӑл трактӑр плуги.

— Пирӗн трактӑр йатлӑ лашасем мар. „Сивкӑ", „Быстрый", „Веселый" йатлисем анчах. Вӗсен плугисем те сирӗнни пеккисем мар. Ҫӑмӑллисене ҫирӗплетсе панӑ вӗсене епӗр. Апла пулсан вӑл йакӑр пире валъли мар,—ответленӗ колхозниксем.

— Трактӑр валъли еппин вӑл машин...

— Аха, ӑна валъли ӗҫ. Йурӗ... Машинӑпа трактӑр станци валъли пулсан пуҫтарса хурӑр-ха вӗсене, пайан кирлӗ мар-ха пире, трактӑрсем ҫук-ха пирӗн.

— Ку тата мӗнле машин, ҫунатисемпе хӑмсарса выртат?

— Трактӑрпа ҫилос турамали вӑл.

Ҫапла, иртнӗ ҫуркуннерен пуҫласа кӗркуннене ҫитиччченех машинсен выставки турӗ Горпо Халӗ те выставкӑ саланман-ха. Анчах ҫынсем машинсене курма пынӑ выставкӑ мар, машинсем хайсемех мыйракисене тӑратса лараҫҫӗ. Горпо членӗсем вара пыркаласа кӗҫӗтмен пуҫӗсене ҫӗлӗксене тайӑлтарса хыҫкаласа кайаҫҫӗ. Ай „вилнӗ капитал", укҫа усӑсӑр выртат, тесе аллисене сулахайала улса утаҫҫӗ. Колхозниксем тата:

— Хӗнемеле тытса сире, ик каслӑ плуг, жнейкӑ, молотилкӑ кӳрсе килӗр, терӗмӗр. Есӗр тем хӑматла йакӑр мыйракисем кӳрсе килтӗр. Аванс укҫине кӑна шыва йатӑр,—тесе вӑрҫаҫҫӗ.

* * *

Чӑн пулнӑ йапалах ҫакӑ Темле тӑн-пуҫпа хӑтланнӑ Йетӗрнесем, те „пурте килте ҫук" пулнӑ вӗсен ҫав вӑхӑтра. Пайан иетӗрнери йалхуҫалӑхӗнче халӗ усӑ курма май ҫук машинсене кӳрсе тултарнӑ вӗсем. Усӑ курма кӑна та мар, машинсене лартса усрама та вырӑн тупаймаҫҫӗ Йетӗрнере. Машинсене лартса усрама мар, вӑрмантан йаваҫ туратт тӗречӗсем кӳрсе тӑкнӑ пек сапаланса выртакан машинсене пухса майлаштарма пӗлекен етем ҫукки те самайах пӑҫлат Йетӗрнесене.

— Вӑл машинсене пухма пӗлекен машиновед тупаймастпӑрах епӗр,—теҫҫӗ райзорисем.

Кирек йепле пулсассӑн та машинсем ыйтуне пурнӑҫа кӗртме кирлех.

— Мана сивӗ.

— Мана йӗпе...

— Ман ҫине йур вӗҫтерет,—теҫҫӗ вӗсем.

**Н. Майак.**

# Тӑвӑлӑ каҫ хыҫҫӑн

Аслӑ Патӑрйел райончӗнчи Йенших прикашчикӗ Гранадски 1782 тенкӗ растратӑ тунӑ.

**Филиппов В. ӳкерчӗкӗ.**



— Ваҫҫӑ, Ваҫҫӑ, тавай шутласа кӑларатпӑр— мӗн чухлӗ епӗр иксӗмӗр ӗнер ӗҫсе йанӑ?

— Ма шутлас? Есӗ луччӑ лавкан кассинче мӗн чухлӗ укҫа ҫитменнине пӑхса тух, вара паллӑ пулӗ.

# Йур çинчен кам мĕн каласа пачĕ

— Йур пит кирлĕ йапала вăл. Тырра пуçтарса кĕртнĕ чухне пирĕн кохозниксем чылайах тырă тăккаласа хăварнăччĕ. Кайран, çанталăк шăнтас умĕн, уйă йĕм-йешĕл калча шăтса ларнăччĕ. Мĕнле пĕтерес ку хамăрăн çитменлĕхсене палăртакан калчана, теттĕмĕрччĕ. Халĕ ĕнтĕ йур çунă хыççăн пирĕн çитменлĕхсене кăтартакан калчасем те йур айне пулчĕç. Йур çуни пирĕншĕн çав йенчен усăлă пулчĕ,—терĕ епĕр йатарласа йанă кореспондента Куславка районĕнчи Аслă Сала колхоз правлени председателĕ.

* * *

— Йурĕ лайăхне лайăх та вăл, анчах йурпа пĕрле сивĕ çанталăксем килеççĕ. Сивĕ çанталăкра ĕçсе ўсĕрĕлсен, шăнса вилесрĕн хăратăп,—терĕ Шупашкар районĕнчи Паçпак йалĕнчи „Ленин" колхоз председателĕ Николайĕв Алексей.

* * *

— Йур çунă хыççăн пирĕн районри йалсем сыснасем пусма тытăнаççĕ. Кăçал та çапла пулчĕ. Йур çунă хыççăн сыснасен шучĕ пит нумай чакса ларчĕ Йурĕ çуман пулсан, пирĕн районри сыснасен шучĕ те чакас çукчĕ,—терĕ Патĕрйел районĕнчи выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен специалиссенчен пĕри.

* * *

— Çĕр питне йур витсе тухрĕ. Пирĕн 20 пин тенкĕ растратăна никам та витес çук,—тесе хучĕç пĕр харăс Тутаркас районĕнчи Шашкар кооперативĕнче ĕçленĕ Соловйовпа Скворцов, тата ыт. йулташсем.

* * *

— Йурĕ хăйех çăват вăл. Чашăксем те çавăн пек пĕлĕтрен çуса тăрсассăн, пирĕн чашăк тăвас план çĕр процентпĕлех тулаччĕ. Халĕ, чашăксем йур пек пĕлĕтрен çуман пирки, 1934-мĕш çулхи 4-мĕш кварталăн производствăлă заданийĕнче кăтартнă 21600 чашăк вырăнне, 7000 чашăк çеç туса кăларма пултартăмăр,—терĕ Утаçкасси йалĕнчи (Сĕнтĕрвăрри районĕ) чашăк тăвакан промысла ертелĕн правленийĕнче анаслаласа ларакансенчен пĕри.

* * *

— Йур кăçал нойабĕр уйăхĕнче çурĕ. Хăш уйăхра кайма шухăшлат-ши? Ийуљ уйăхĕнче кайат пулсассăн, ăна уйсенче каплантарса хăварма май уйăхĕнче тытăнсан та, кайа пулмаст пулĕ,—терĕ Мăн Илпешри (Шупашкар р.) „Хĕрлĕ çăлтăр" колхоз председателĕ.

* * *

— Кăçал йур сахал пулат, кашни çын пуçне пĕрер килошар парат, терĕç те, йур пуçтарма крышă çинех улăхса карăм. Пĕр корзинкă тултарнă хушăра йурĕ сала кайак пуçĕ пек çăва пуçларĕ, пуçтарса та çитерейменĕм. Антăм вара. Суйа пулнă епĕ илтнĕ халап,—терĕ хулара пурăнакан 82 çулхи карчăк.

* * *

— Хытă çынтан раштавра та пĕр кĕреçе йур ыйтса илеймĕн,—терĕ финанс планĕсене тултарас тĕлĕшпе кайа йулса пыракан Канаш районĕнчи Ача-касси йалсовет председателĕ, укçа хăй тĕленех пухăнассине кĕтсе кутник сакки çинче выртнă чухне.

* * *

— Йур çуман пулсан кăçал кăмпа нумай пухса хунă пулаттăмăр, йур çуни пĕтерсе хучĕ. Йур çийĕн пионерсене кăмпа пуçтарма кăларса йамалла мар-ши, —терĕ Шупашкарти пахча-çимĕç сойузĕнче ĕçлекенсенчен пĕри „раштава хирĕç кампани" валљи ерех илнĕ хыççăн, закускă шыранă чухне.

Иван М-и

# Ыйту паран—ответ илен.

**Ыйту:** Чи ăшă вырăн çĕр çинче ăçта?

**Ответ:** Африкăн варрипе Лăпкă океан çинчи пĕчĕк утравсенче çанталăк ниçтинчен те шăрăх тăрат. Унта сулхăнра та ăшă 45 градуса çитет. Унтан ăшă вырăн Йĕтĕрне районĕнчи Палтай кооперативĕнче тупнă Ишейĕвпа Михайлăв, тата ыт. Вăл ăшă вырăнта Михайлăвĕ 913 тенкĕ, Ишейĕвĕ—3877 тенкĕ, прикашчĕкĕ—400 тенкĕ растратă тунă. Халĕ вĕсемшĕн ăшă пулнă вырăн сивĕнсе йулнă, тет.

**Ыйту:** Ăçта пит сивĕ?

**Ответ:** Куславкка комбиначĕн инженерпа техниксен 5 мĕш номĕрлĕ çуртĕнче, чўрече кантăкĕсем пĕр хут çеç тата çĕмрĕк пирки пит сивĕ пулат, теççĕ. Унтан та сивĕрех Çĕпĕрти Верхойанск хулинче. Унта февраљпе йанвар уйăхĕсенче сивĕ 72 градуса çитет. Комбинатăн 5-мĕш номĕрлă сивĕ Верхойанск хулинчи сивĕпе танлаштарсан ним те мар.

**Ыйту:** Мĕнле йăвăç пуринчен те хулăнрах?

**Ответ:** Йуман йăвăçăн хулăнăшĕ çичĕ метр таранччен пулат, евкалипт йатлă йăвăçăн—8 метр, мамăнт йăвăçĕн—11 метр. Пуринчен хулăн каштан йатлă йăвăç. Увăн хулăнăшĕ 20 метр тухат. Анаткас Уравăшри „Комбайн" колхозра (Вăрнар р.) А. В. Кудрйавцĕв йатлă куштан пур. Куштан тенĕрен каштан пек хулăн йапала мар вара вăл. Каштан пек хулăн пулнăшăн мар ăна йал çиннисем куштан тенĕ, колхоз пурлăхне салатса хулиганланса çўренĕшĕн куштан, тенĕ.

**Ыйту:** Мĕншĕн етемĕн сылтăм алли сулахайинчен йавăртарах (вăйлăрах) пулат?

**Ответ:** Мĕншĕн тесен етем ўт-пĕвĕн сылтăмри çуррине мимен сулахайри пайĕ тытса тăрат. Мимен сулахайри пайĕ сылтăмринчен пысăкрах (нумайрах) пулат. Вайлă пирки, унтан тухса кайакан нервăсем урлă, сылтăм алли те сулахайринчен вăйлăрах ĕçлет. Çавăнпах, Шупашкар районĕнчи Паçпак колхозĕн председателĕ Николайĕв Алексей хăйсен йалĕнчи граждансене—Никитинпа Родионова сылтăм аллипе ылтарах хĕнесе йанă. 1200 тенкĕ растратăна та вăл, сулахайипе мар, сылтăммипех тунă.



Ҫӗмӗрле вӑрманпромхозӗн вӑрман ӗҫлекенсем валлин тунӑ баракӗнче хӑнкӑласем туллийех.

**Вӑрманпромхоз директӑрӗ:**—Ой, хӑнкласем тапса тухнӑ-ӑ, мӗн тӑвас?

**Хӑнкӑла:**—Ан хӑра! Халех кайатпӑр. Пире есӗ тытса тӑнӑ бараксенче лайӑх пӑхса усранӑшӑн тав тума килсе кайас терӗмӗр кунта. Акӑ тыт—чунтан-вартан тав туса ҫырнӑ хут. Ил те, ку паха хута пӗрене ҫумнех ҫакса хур.

# Правилне ăнланаймарăм.

— Аван иртрĕ пайан математика урокĕ Елĕк районĕн Мăн-Шетмĕри кĕçĕн вăтам шкулĕнче. Математикăпа вĕрентекен Комаров ачасене алгебрă урокĕнче ваксене хушассипе кăларасси çинчен тĕплĕн ăнлантарчĕ, тĕслĕхсем илсе шутласа пачĕ. Йулашкинчен,—ăнлантăни, Тихăнăв?— тесе ыйтрĕ 7-мĕш класри вĕренекенрен.

— Ăнлантăм,—ответлерĕ лешĕ.

— Ăнлантăн пулсан йурĕ, килте 121-пе 122-мĕш номĕрсенчи задачăсене шутлăр, тесе шăнкрав пулнипе пĕрле класран тухрĕ.

---

— Тухмасть мур пуçĕ, никак тухмасть. Мĕн тĕрлĕ çавăрса пăхмарăм пулĕ, çапах та тухмасть. Есĕ те шутласа пăх ха, тен есĕ манран маçтăртарах шутлăн, кĕнекене тыттарчĕ Тихăнăв хăйĕн йулташне Петрова, задачăна шутласа кăларайманнипе тарăхса.

— Ара есĕ правилне вула, правилă мĕнле шутламалине питĕ тĕрĕс каласа паракан, пулăшас шутпа ăнлантарчĕ Петров.

Тытăнчĕç правила вулама: „Кавказ вэс могырыщто курыкла коклиште элэктростанцэ—влак ышталтынытˮ...

— Нимĕн те ăнланмастăп, хутте мăйран çĕçĕпе кас, ăнланма пултараймасăп, терĕ Тихăнăв çамки çине пăрçаланса тухнă тарне шăлса.

— Мĕнле ăнланмала мар, пар-ха хам вулам. Есĕ вулама та манса кайнă иккен, хирĕçлесе кĕнекене хăйĕн аллине илсе вулама тытăнчĕ Петров. „Участык пэлэн пашаз—влаклан палаткым ыштыльыч. Вара вашкэ бараки 6-мĕш пулма кирлĕ. Хисепне тупма радикал айĕнчиˮ... Çук, нимĕн те ăнланмастăп. Ку алгебрăна „6—7-мĕш вĕренў çулĕсемˮ валљи тесе суйса çырнă. Ку алгеберпа инженерсене вĕрентсе кăларакан институтра вĕрентеççĕ пулмала. Правĕлсене те пирĕн чĕлхепе çырман. И. Капитанăвне куçарнăшăн ĕнселемеле, тесе кĕнекене сумка чикрĕ.

---

Тепĕр кунне шкулра Тихăнăвпа Петров мĕншĕн правилăсене ăнланманнине пурте пĕлтĕмĕр. Вăтам шкул валљи пичетлесе кăларнă стабиљнăй учебник алгебрă варне 64-мĕш страницăран пуçласа 97-мĕш страница çитиччен Мари чĕлхипе çырнă обществăведени кĕнеки кĕрсе кайнă пулнă. Камăн суккăр куçĕ кĕнекине майласа обложкă витнĕ ши? Кĕнекене пухнă чухне куçĕ ăçта пулнă-ши?

**Сўпенке Илли.**

# Ăнланма çăмăл сăмахсене ăнлантарса паракан словар

(Йетĕрне хулине пыракансем валљи йатарласа çырнăскер).

Çĕр чăмăрĕн пайĕсем, патшалĕхсем, халăхсем кăна мар, кўршĕлĕ йалсемпе саласем те йапаласене хăйсем майлă йат парса хăйсен ăс-тăнĕ хушнă пек ăнланса пыни пур. Сăмахран, выљăх апачĕ усранă ўплене вырăсла пĕрремĕш йалĕнче, калăпăр, мйаки ипă теççĕ, иккĕмĕшĕнче—рига, теççĕ, виççĕмĕшĕнче—половийа, теççĕ, арпине йе утине йăгмали хатĕрне çав йалсенчисемех „плетўхаˮ та теççĕ, „зобњаˮ та теççĕ, „корзинăˮ та теççĕ.

Çавăнпах та ĕнтĕ пирĕн пуçа—йатарласах калаçнă чухне пурте асăнакан сăмахсене Йетĕрне валљи ăнлантарса памали словар кăларса парас шухăш килсе кĕчĕ, мĕншĕн тесен хăшпĕр сăмахсене Йетĕрнесем хăйсем майлă ăнланса ћурăнаççĕ.

Критиксем тата Йетĕрнене пирвайхи хут пыракансем кун пек словаре туса кăларнăшăн пире пит мухтассине малтанах пĕлсе, епĕр вăл питĕ ответлă ĕçе тытăнатпăр.

**Книготорг** — кирлĕ литературăна ăçта тупма пуласси çинчен справкăсем паракан магазин. Унтах блокнотсем çинчен те справкăсем илме пулать.

**Мунча** — хула тулашĕнчи туса пĕтермен çурт, çўллĕ йăваç хўммĕ варричче лараканскер. Йулашки тăвата çул хушшинче хула çыннисен урисем пырса пусман вырăн.

**Обществă сачĕ** — çамрак тыхасем çўрекен вырăн ытти выљăхсем те екскурçине пырса кайкалаççĕ.

**Почта**—çыхăну тытмали йапала. Çав кăмăллă учреждени çинчен тĕплĕрехĕн пĕлмешкĕн хăвăн унта пырса пĕр-пĕр ĕç туса каймала йе кампа та пулин телефонпа калаçса пăхмала. Чăтăмсăр çынна телефон тăрăх калаçма та хушмастпăр.

**Радио** — ку сăмаха хамăрăн словаре кĕртмесен те йурамалаччĕ, мĕншĕн тесен вăл сăмаха пур хуласемпе йалсенче те пĕр пекех ăнланаççĕ. Йетĕрнесен шучĕпе радио вăл—радио итлекенсен нервипе выљакан инструмент пулать.

**Стадион** — усă курма тытăнман çĕр лаптăкĕ, вак выљăх-чĕрлĕхсене кĕтмели вырăн туса хунăскер. Хыпарсем çўренĕ тăрăх, спорт тĕлĕшĕпе çавăнта ĕçлемеле пулать, тет ўлĕм.

**Тротуар** — йур купаламали вырăн. Çуллахи вăхăтсенче çуран çынсем çўремели вырăн.

**Шыв**—пăтранчăк тутăх тĕслĕ шĕвек йапала. Тути пит йĕксĕк. Хулара пĕтĕмпе те пĕр çăл кăна пирки, халăх унпах усă курать.

**Урамри хунар**—Йетĕрнесем курман йапаласенчен пĕри (тĕттĕм каçсенче йетĕрнесем çамкисем çине лартнă хунарпа хутшăнтарса ăнланма хушмастпăр).

**Ч.**

---

## Вăтакас Татмăшра.

— Радио калаçакан йапала, теççĕ. Темме пирĕн Вăтакас Татмăш йалсозечĕ лартнă радио калаçаканни пулмарĕ, шăхăраканни çеç пулчĕ.

— Лайăх шăхăрать-и?

— Лайăххи мĕнĕ... Итлесе пăх ав...

— Вăл радио антенни-çке.

— Çавă ĕнтĕ шăхăрать пирĕн, аппарачĕ шăхăрма та пĕлмест.

**Йăващ.**

# Пилӗк тăван—пӗр йăваран



Акă пăхăр:
Пиллӗкӗн тăраççӗ
Пурте вӗсем
Ĕçрен хăраççӗ.

Пӗри, ак ку—
Кахал Йакку
Сăмсине чакалать,
Унпа йăпанать.

Иккӗмӗшӗ куçне хупласа
Йуласшăн ӗçрен пытанса:—
Вăрман хатӗрлевне тухмасть!
„Ман,—тет,—куç курмасть.

Ак пит намăссăр етем
Пуçне хыçсах пурнасшăн тем.
„Выртса канма“ пӗлмесӗрех
Хӗрсе кайсах вăл анаслать.

Квалификацилӗ ўркевçӗ
Каллех ӗçе тухма ўркенчӗ.
Хыçне кăчăрт-кăчăрт хыçса
Йур тытасран йуласшăн пăрăнса.

Ак ку тата карма çăвар
Ĕçре нихçан та уçă мар,
Тапак туртса кун иртерме
Унтан ăсти çук ертелре. **Савкай.**

---

# Суту-илў маçтăрӗ.

Йӗтӗрне районӗнчи Măн-Сӗнтӗр йалӗ касхине çап-çутах. Пурте лампă çутнă. Лампă çутисем йăлтăртататççӗ кăна. Пуривчен ытла Филиппăв прикашчик тусӗсен лампisем хытă йăлтăртатаççӗ. Çав хушăрах пӗр пысăк икӗ хутлă çурт пӗр çутăсăр хурланчăклăн ларать. Вăл икӗ хутлă пысăк çуртра никам та пурăнакан çук тейӗр есӗр. Çук, апла мар. Вăл пысăк çурт—шкул. Унта темӗн чухлӗ ача пăча вӗренет. Кaçхине те вăл çурт çынсăр лармасть ка‹›ни каçах вăл çуртра учителсем вӗренекенсен тетрачӗсене тӗрӗслесе лараççӗ. Ак ун‹›а кӗçӗрхи каç та виçӗ учителӗ ачасен тетрачӗсене тӗрӗслесе лараççӗ.

—Фут-ти!—терӗ пӗр учителӗ,—куç курманнипе йапăх çырнă ача тетрачӗ çинех „хорошо“ лартса панă! Пӗтерет ку сутă çукки.

—Ан шарла ха,—терӗ теприйӗ,—манăн та сан пекех 3×3=16 пулса ларнă. Куç курмасть те епӗ „4×4“ тесе. Ачи тӗрӗсех тунă мӗн. 3×3=9 пулать тесех çырнă. Еп „хорошо“ памаласкерне „неуд“ патăм,—терӗ те, тӗгтӗм çӗртех тетрать çине „хорошо“ тесе çырса лартрӗ.

—Манăн та пысăк йăнăш пулчӗ,—терӗ виççӗмӗш учителӗ:—ачасен тетрачӗсем çине паллă тăвас вырăнне пӗр çӗтӗк кив кӗнеке çине „отличнă“ тесе çырса паллă тунă.—пӗтерет ку сутă çукки,—тесе çӗтӗк кӗнекине алăк патнеле ывăтса йачӗ.

—Ма мана кӗнекепе пуçран перетӗн, курмастăн-им еп ӗçлесе ларнине!—тесе кăшкăрса йачӗ 3×3=16 тесе çырса хуракан учителӗ.

—Тот-тă курмарăм çав. Çутă çуккипе мӗнле курас ман,—терӗ кӗнекине алăк патнеле ывăтакanӗ.

—Ех, ку çутă çукки тӗппех пӗтӗрет; пилӗк куçлăх тăхăнсан та куç нимӗн те курас çук. Хăçан килӗ-ши ку краççин? Килсессӗн пӗрремӗш черетре илетпӗр те-ха... Посудине Филиппăва леççе парса та-ха, килсен илетпӗрех.

—Е-е-е, есӗр нимӗн те пӗлместӗр иккен,—терӗ шкул пуçлăхӗ,—пирӗн шкула валĕçи 20 литр краççин килнӗ мӗн, анчах пире Филиппăв прикашчик краççин çук, тесе суйса посудăна илсе йулнă та, краççине çав кунах хăйӗн тусӗсене салатса парса пӗтернӗ; посудине Илĕйинкă йалӗнчи тусне парса йанă.

—А, ма пӗркунне илсе килмерӗн?—терӗ тепӗр учителӗ.

—Çук, тесе суйрӗ вăл мана.

—Сан ӗненмеле пулман

—А мӗн тăвас тетӗн? Шантарсах каларӗ. „Ыран пулать, посудуна хăвар,“ терӗ те, хăвартăм. Ес ху пулсан та ӗненмеле.

—Мӗн тумала-ха?

—Апла пулсан пӗтӗмпех Филиппăв айăплă.

Учителсем тетрачӗсене пуçтарса хучӗç те, сӗтелсене, пукансене çапăнкаласа тӗттӗм шкултан тухса хваттерӗсене саланчӗç.

Татах калатăп, йулташсем, мӗнле калăн: Филиппăв йулташ суту-илў тума пӗлмест, тесе. Вăл вӗт суту-илў урлă улталассине „120 процент хăйӗн аллине çавăрса илсе“ шкулсене тӗттӗмре лартма пултарать. Çавăнпа та Филиппăв Никита прикашчике хаĕтерех йӗплӗ çăмах хыптарса вырăнтан кăларса сирпӗтмеле.

**М. Дангер**

# Куракансенчен пĕри

Колхозри драмкружоксем вумайĕшĕ пьесăри ролĕсене вĕренсе çитмесĕрех халăха пухса спектакльсем лартаççĕ.



— Шăппăнтарах, суфлёр йултăш! Малала та кун пекех спектакль итлеме чăрмантарса ларатăн пулсан, епĕ сана кунтан çавăтсах кăларса йаратăп.

---

# Чавса çывăх та, çыртаймăн

Шăмат пасарĕнчен таврăнса Марку пӳртне хыпаланса кĕрсе кайрĕ. Пĕчĕк пӳ чĕ тавра пăхса çаврăнчĕ те, хуйха кайса малти тенкел çине кайса ларчĕ. Унтан йерипен пуплеме пуçларĕ:—Ах, шуйтан арăмĕ, питĕ ăслă мур. Иртерех кайсан купăста калчи йӳнĕ пулать, тет. Епĕ ăна итлесе ирех уттартăм пасара. А вăл еп килеччен качча тухса тарнă. Мĕн çитмен ăна?.. Çитменнине тата хура кĕпе-йĕмсĕр пуçне нимĕн те хăварман. Ну, пур-пĕр хăйĕнне илсе кайнă, манне мар...

Татах тем те пĕр пуплерĕ Марку. Уншăн пайан пысăк хуйхă. Ик аллине кăкăр умне тытсах, чылай урай тăрăх кĕрслеттерсе утса çаврăнчĕ вăл арăмĕ качча тухса тарнăшăн хуйхăрса.

Ир те çимесĕрех кайнăскерĕн хырăмĕ выçса килнипе, çăкăра тытса, çĕçĕ шырама тытăнчĕ. Тем чул шырасан та пĕр хуçăк çĕçĕсĕр пуçне урăх çĕçĕ тупаймарĕ.

— Ых-х, выçлăх, çĕçĕ те илсе кайнă вĕт,—вăрçрĕ Марку. Унтан йӳçнĕ уйранне ангарса çăкăрпа сыпса çиме тытăнчĕ. Çаплах ун пуçĕнче çавраçил купи пек шухăшсем арăмĕ çинчен пăтранаççĕ.

— Ĕнене кĕтĕве йартармарĕ. „Пайан пахчанах кăкарас ха“, тет. Кĕтеве йарсан илсе кайас çук, терĕ пуль. Илсе кайтăр—хăйĕн. Еп илмен, хăйĕнпе пĕрле илсе килнĕ,—терĕ çăварĕнчи çăкăрпе уйрана хутăштарса.

Çисе тăраннă хыççăн, сĕтел çинчи хатĕрсене пуçтарчĕ те:—Арăм тухса кайнăшăн кулянас мар, арăм вырăнне арăм пулĕ,—тесе, Марку çийĕнчи сăхманне кутник сакки çине сарса канма выртрĕ.

Пĕре выртсан тепĕр ирсĕр те вырăнтан тапранмарĕ. Вăл çĕрĕпех авланасси çинчен шутласа выртса çывăраймарĕ.

Ир тăрсан апатланмасăрах çĕнĕрен авланас шутпа Марку йевчĕ шыраса йал тăрăх çурерĕ. Шыракан тупатех. Çак кунах хĕр патне вĕçтерчĕ. Пĕр кун, ик кун, виç кун шыраса, хĕр тупрĕ вăл. Арăмĕ тухса кайни ерне çитнĕ тĕле Марку авланчĕ, ачаллă матка туйанчĕ.

* * *

Вăхăт малала шурĕ. Уй-хирте ĕç пуçланчĕ. Колхозниксем йăсмăк-пăрçа, тата ытти тырăсене çумсенчен тасатаççĕ. Хушăран Марку та тухса ĕçлекелерĕ.

— Арăмна ма илсе тухмастăн?—теççĕ колхозниксем Марку тухнă кунсенче.

— Ачипе тухаймаст-ха вăл,—ответлет вĕсене хирĕç Марку.

Кунсем, ернесем иртрĕç сисĕмсĕр. Колхоз утă çулма тухрĕ. Марку утă çулнипе нумайах ĕçкунĕ тăвас çук, терĕ пулмала: утă çулнă çĕре тухса курăнмарĕ. Çитменни çине тата çави те çук.

Марку çакăн пек ĕçе тухманни колхозниксене тĕлĕнтерчĕ.

— Ĕçре савăнас вырăнне килте арăмĕпе савăнат пулĕ,—теççĕ колхозниксем Маркува тиркесе.

Утă çулса пуçтарчĕç. Хирте татах вирлĕ ĕç пуçланчĕ. Тăпери хĕвел хĕрÿлĕхне пĕр чакармасăр хĕртет.

Шăрăх кунсем. Колхозниксемпе колхозницăсем ир пуçласа каçченех хăмăш пек выраша выраççĕ.

Пирĕн Марку та ĕçлерĕ. Пĕр ир те вăл апатпа йулакан арăмсенчен малтан ĕçе тухман. Кăнтăрлахи канăç çитсен арăмĕпе иккĕшĕ те канма киле васкаççĕ. Çынсем канса тăраççĕ. Маркупа арăмĕ çаплах çук-ха. Хĕрсех килте канаççĕ. Колхозниксем 50—60 кĕлте тунă çĕре тин тухаççĕ вĕсем килтен.

— Вăн пирĕн улпутпа майри тухаççĕ,—тесе ахăраççĕ колхозниксем Маркупа арăмĕ тухнине курса.

Нумай калаçмаççĕ ĕçлекенсем. Вĕсен шучĕ тырра часрах пĕтересси. Вăхăт сисĕнмест. Часах каç пулат. Пурте кĕлтисене шутлама пуçлаççĕ. Бригадир çырат.—Ну, Марку Емелйанчă, миçе кĕлте?—ыйтат бригадир Марков.

— Ман арăмпа иксĕмĕрĕн 250 кĕлте анчах,—ответлет Марку.

Тĕлĕнеççĕ колхозниксем, вĕсем иккĕн 250 кĕлте анчах тунă, теприсем пĕччен 300 кĕлте тăваççĕ. Çакăн пек пулса пычĕ Маркун кашни кунах. Çакăн пек пулчĕ сĕлĕ вырнă вăхăтра та.

* * *

Нойабĕрĕн 28-мĕш каçхине колхозниксен пухăвĕ. Пухура ĕç кунĕ тăрăх кама мĕн чул тырă тивессине каласа параççĕ. Черетпе Марку патне те çитрĕç.

— Емелйанăв Марка тĕш тырă 30 пăт тухат, 25-шне авансăн илнĕ, пилĕк пăтне тата кайран панă,—терĕ колхоз председателĕ Никитин.

Марку тивĕçлĕ тыррине илсе пĕтернине пĕлсен хуйха ÿкрĕ. „Епĕ пĕр уйăх ытла çакăр çимен, çĕрулмипе кăна пурăнатпăр, çапах мана тырă памастăр",—тесе каласшăнчĕ Марку пухура, анчах хăй айăплине туйрĕ те шухăшне айакала сирчĕ. Пуху пĕтсен—„мĕнле те пулсан выçăлă тутăлă пурăнас пулат", тенĕ шухăшĕпе килне хуйхăлăн утрĕ Марку. Чавса çывăх та—çиртаймăн, терĕ вăл нимĕн калама çукран.

Дубровский

## Планра пĕр сурăх та, пĕр сысна та çук.

Колхозсем, йалсем план кĕтнĕ.

— Хăçан параççĕ пире план? Мĕн чухлĕ выльăх усрамала, çĕнĕрен илмелле, улăштармала,—паллă мар пайана,—тенĕ вĕсем,—План парăр!—вăрçнă район пырсан.

— Вăрçмали çук. Пусар-ха, сутар-ха выльăхсене. Пока план çук,—тенĕ теприсем.

— Аха, сире план! Парас план,—тенĕ райзурисем.

План тенĕ йапалара цыфăрсем пур. Вăл цыфăрсене пускиле кивçене каймасăрах тупса лартма пулат. Маччанала пăхма ĕнсе тымарне кăна шеллемеле мар, Йĕтĕрне райçĕрĕçпайĕнчи плановиксен те çав меслетпе усă курнă. Каснă-лартнă çавăн пек тунă.

— Пулчĕ вĕт план—чепуха ăна тума... парă пустйаков кăна. План ыйтса йăланаççĕ тата. Акă вăл!—хавасланнă плановиксем плансем туса пĕтерсен.

Пулчĕ терĕри-ха, ачасем, план?

— Пулмасăр, пулчĕ,—ответленĕ ачисем.

Матур ачасем!.. Аслă ĕçсен планне турăр. Халĕ çапăçас пулат,—çирĕплетнĕ плана райзу пуçлăхĕ.

Турăхла йалĕнчи йединоличниксем райзура плановиксенчен те ытларах аптăракана йернĕ. Ларматăма та пĕлмеççĕ вĕсем хаљ. Аслă ĕçсен планĕ аташтарат вĕсене.

— Ах тамаша, ăçта чикес вăл выльăх чĕрлĕхе? Карти-хури, апачĕ-çимĕçĕ!.. Аптрамалă!—тенĕ пĕр йединоличникĕ.

— Ан тĕлен-ха,—тенĕ тепĕр йединоличникĕ.—Райзурисем пирĕн пекех ухмах мар пулĕ. Вăл плана колхозран тухса йединоличниксен хушăнассине шута илсе тунă пулĕ,—тенĕ.

—Кĕçех тухчăр сана колхозран. Пĭх мĕнле çирĕпленсе пыраççĕ вĕсем, колхозсем,—ответленĕ лешĕ.

Çапла сÿсе-йавнă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмели плана Турăхла йалĕнчи йединоличниксем. Вара йулашкинчен:

— Тĕлĕнмеле,—тенĕ вĕсем.

Тĕрĕс калаççĕ вĕсем. Хусамăрах шутласа пăхăр. Ыгла та тĕлĕнмеле çакăнтан. Турăхла йалĕнче йединоличниксем мĕн пурĕ те икĕ хуçалăх кăна. Ытисем ăçта кайнине хусамăрах пĕлетĕр—колхоза кĕнĕ вĕсем. Çак икĕ хуçалăха Йĕтĕрне райçĕрпайĕ 1935 çулта 40 ĕне, икĕ çула çитмен 28 пăру тата амăшай пăрусем 25 усрамăшкăн план панă.

План çакă!

Çакă план тăрăх сурăхлă йединоличниксен пĕр сурăх та, пĕр сысна та усрамала мар.

* * *

Çапла планлаççĕ Йĕтĕрнере, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе, хусамăрах куратăр, бÿрократла выльама самайах хăнăхаççĕ. Теприсемшĕн вăл ĕненме те питĕ хĕн пулĕ. Тĕлĕкре пулĕ вăл, ун пек ăçтан пултăр ара, тейĕç.

Тĕлĕк мар вăл.

Н. Майак.

# Вунтӑваттӑран ыйту кӑларсан сакӑр пулать

Мӑн-Етмен йалканашӗ канцелярийӗнчен тухрӑм та Мӑн Етмен шкулнелле утрӑм. Анчах ҫунӑ йур ҫемҫе, кӑпӑшка: хыҫра утнӑ йӗр пулса пырать. Хӗвел чылай хӑпарнӑ, канцеляринчен инҫех те мар Мӑн-Етмен колхозӗн йӗгемӗ ҫинчи ҫапнӑ кӗлте капанӗсем курнаҫҫӗ. Унта колхозниксем калаҫса шакӑлтатнисем илтӗнеҫҫӗ. Тӳпе туса курӑм валеҫеҫҫӗ. Ак, мана хирӗҫ ҫара ҫуна кӳлнӗ лаша йашлатарса чупса пырать. Ҫуни ҫине пӗр пуслӑх, тепӗр сенӗк хунӑ та, хӑй ура ҫине тӑрса лашине хӑваласа, пӗр колхозник иртсе кайрӗ. Утатӑп. Ак, шкул курӑна пуҫларӗ. Шкул тулашӗнче ачасем чупкалаҫҫӗ. Ҫурӑ йарас умӗнхи вӗлле йантранӑ пек шкул сӗрлет.

— Переменӑ пулас-ха, ачасем тулта чупкалаҫҫӗ,— тесе пыратӑп. Шкул ҫурчӗ патне ҫитсен урасене шӑлкаласа шкул канцелярине кӗтӗм.

— Сывӑ пурнатӑр-и?

— Пурнатпӑр-ха, антрамастпӑр,—терӗ те 1-мӗш класра вӗрентекен Жирнов сӗтел ҫинчи аш тураса тултарнӑ пӑслӑнса ларан чашӑк ҫине пӑхрӗ. Шкул пуҫлӑхӗ Быков Егор ман ҫине пӑхрӗ те, класа кӗмели алӑка уҫса, клас пӳлӗмне кайрӗ.

— Ан кай! Ма кайатӑн?—тесе шкул сторӑжӗ, чашӑкпа йашка йӑтса тухса сӗтел ҫине лартрӗ те, ман ҫине пӑхса тӑчӗ. Епӗ ним шарламаннине курса, Жирнов ҫине пӑхрӗ те:

— Аҫта тухрӗ?.. Малтан ҫийесшӗн антратӑр, йашкине антарсан ҫимесӗр ӑҫта кайрӗ тата?—терӗ.

— Сирӗн переменӑ-и, урок вӑхӑчӗ-и?

— Епӗ, калас пулать, „значетсӑ" ачасене ӗҫ патӑм.. заданисем тӑваҫҫӗ,—терӗ Жирнов.

— Переменӑ мар-и?

— „Значетсӑ" переменӑ мар... Уроксем пуҫланни 15 минут та ҫук-ха.

— Ачасем апат ҫинӗ-и?

— Ҫак урок иртсен...

— Аҭа ха, урока пӑрахса тухса ҫимеҫҫӗ. Ҫиме хӑйӗн вӑхӑчӗ пур. Санӑн ачасем хӑйсемех ӗҫлемеҫҫӗ пулас. тулта чупаҫҫӗ,—тесен, Жирнов, йантланӑ апат ҫине салхуллӑн пӑхса илчӗ те, сӗтел хушшинчен тухрӗ.

— Аҭа-ха, епӗ те пырам урока,—терӗм те, учитлӗ тухсан ун хыҫҫӑн тухрӑм.

— Тӑхта ха,—терӗ сторӑжра пурнакан хӗрарӑм.—Ҫимелеччӗ.

— Жирнов ман умӑн тухнӑскер класала чупсах кайрӗ, епӗ васкамасӑрах утса пырса класа кӗтӗм. Жирнов урок пуҫланӑ.

— Вот „значетсӑ", ачасем!.. Ларӑр, вырӑнӑра ларӑр..

— Пирӗн вырӑн ҫук,—тесе мӑн шарӑхсем сыхнӑ, сумкисене ҫакнӑ ачасем пӑтранаҫҫӗ.

— Ну „значетсӑ" кам шутларӗ?

— Пирӗн, тетрадсем те ҫук...

— Ларӑр... Пуҫлатпӑр. „Значетсӑ" кӑна мӗнле шутлатпӑр?—терӗ те доска ҫине пӳрнипе тӗртсе тӑчӗ. Ачасем хусканма пӑрахрӗҫ, вырнаҫкаласа ларчӗҫ. 5 хӗрача вырӑнсӑрах йулса стена ҫумне кайса, лӑпчӑнса тӑчӗҫ.

— Кусем валли „значетсӑ" вырӑн ҫук,—тесе учитлӗ ман ҫине пӑхрӗ. Ачасем унтала-кунтала пӑхкалаҫҫӗ: итлемеҫҫӗ. Учитлӗ уткалать, пӑхкалать...

— Кам малтанхи примера шутларӗ?

Ачасем шарламаннине курсан, учитлӗ антраса тӑчӗ.

— Пӑхӑр... „Значетсӑ" 8+6—12 миҫе? 8-та 6 „значетсӑ" вунтӑватта... Ҫапла-и?..

— Ҫапла-ы! Ҫапла!—тесе кӑшкӑрчӗҫ иккӗн-виҫҫӗн.

— Унтан „значетсӑ" 12 кӑларсан 2 йулат-и?

— Иккӗ, иккӗ!—кӑшкӑраҫҫӗ. Пӗрисем ура ҫине тӑрса сумкӑсем ҫакаҫҫӗ. Кӗтесре иккӗн темшӗн вӑрҫаҫҫӗ, доска патне тухса учитлӗ патне виҫҫӗн пыраҫҫӗ.

— Аҫта кайатӑр? Ма шавлатӑр? Ей, мӗн пулнӑ сире? „Значетсӑ" малала шутлатпӑр,—терӗ те учитлӗ тепӗр пример тӗлне пӳрнине тытрӗ.

— Кунта пӑхӑр: 14-ран? пали кӑларсан 8 йулать. Куратӑр-и?

— Куратпӑр.

— Курмастпӑр!—тет такӑшӗ.

— 14—? кӑларсан миҫе пулать?

— Ачасем шарламаҫҫӗ.

— 14—? кӑларсан 8 пулать... „ыйту" вырӑнне 6 пулать...

— Есӗр ма ҫырмастӑр.

— Хут ҫук... Манӑн кӑранташ ҫухалнӑ...

— Пӑх-ха, кусем ҫӑкӑр ҫийеҫҫӗ.

Учитлӗ пӑтрашрӗ, авӑрашрӗ, йулашкинчен ӑшӑрхаса тарласа кайрӗ, Звонок пулчӗ. Учитлӗ хаш! сывласа йачӗ те:

— Халь переменӑ!—терӗ.

---

**Каппайчӑк ача.**



— Порфтӗлсӗр конькипе йарӑнма пӗрте лайӑх мар.

— Ну, Жирнов, урок йапăх иртеретĕн... Урока хатĕрленмен есĕ!

— Ма, епĕ ăна пĕлетĕп. Манăн план пур. Плансăр ĕçлеместĕп...

— Ачасем сана итлемеççĕ.

— Да-а, дисциплинă çук. Ку „значетсă" вернă йапăхрах,—тет Жирнов.

— Урок аван иртрĕ... Потому, калас пулат, епĕ хам ăна лайăх пĕлегĕп. 14 ран—? кăларатăп, а „значетсă" миçе йулни ахалех паллă. Çавăнтах миçе пулнине те лартнă.

— Есĕ урока тĕрĕс иртермерĕн...

— Ма, манăн план пур.

— Партăсем ма çитмеççĕ сан класра?

— Вăл уш ман ĕç мар... „значетсă" шкулта заведуйушчи пур... А урок иртерме манăн план пур.

— Пар-ха планна...

— План кунта мар... Ман плана леш ернерех заведуйушчи çирĕплетрĕ. Плансăр мар. Пĕр ернелĕх тунă план пуррине заведуйушчи пĕлет.

— Йурамаст апла ĕçлеме... Кашни урока иртерме хатĕрленмеле,— тесе урок йĕркисем çинчен каласан, Жирнов ним шарламасăр ларчĕ.

— „Значетсă" есĕ план пуррине ĕненместĕн... Епĕ Йетĕрнере техникумра вĕреннĕ... „Значетсă" епĕ пултараймастăп-и?

— Пултараймастăн, тăрăшмастăн...

— Тĕрĕс мар. Ку „значетсă" личний счета...

— Заочнĕкре тăмастăн, вĕренместĕн, тăрăшмастăн, кашни кун киле чупатăн, ачасене асаплантарса кун иртеретĕн.

— Ăçта апла калатăн, епĕ тен вĕренсен инженер пулăп... „Значетсă" есĕ тӳрех мана апла ăçтан калама пултаратăн. Е-е курнă йапала... 14—? кăларсан саккăр йулат... Ăна ухмах та курĕ...

— Ну, йурĕ... 14 ран? кăларсан 8 йулат-ха, есĕ ăна пĕлтĕн... Мăн-Етмен шкулĕнчен сана кăларсан мĕн пулат.

— Манăн план пур. Ăçтан,—„значетсă" ăçтан... Ку личний счета... Епĕ... Ку тĕрĕс мар... Есĕ малтан „значетсă" кăтарту пар, унтан тин ыгăвăр... Труках кăларма йурамаст. Манăн план пур...

Калай.

---

# Арлапа шăши

**Йуптару.**

Уйра плугă ларнă,
Колхоз ăна ĕçе кăларнă.
Пĕре лашасем тăварсан
Плугă патне чупса çитнĕ арлан.
—„Вот!—тет,—ку аван йапала—
Анчах, мĕскерле туртмала?
Вăл лаша вăйĕнчен тĕлĕнет.
Çĕр арлансăр туртаймăн çав, тет.
Сахал мар чĕрчунсем çут тĕнчен:
Таçтан, муклашка тăрринчен
Пĕр хăмăр шăши сиксе анчĕ—
Ну, паллах, ун йумахĕ пуçланчĕ:
—„Туртатăп. Пĕчченех ак туртатăп!
Шăлпала хурçăна çыртса татăп.
Анана сахал мар сухаланă,
Кунашкал плугсене куркаланă.
„Ĕçлеме" пикенчĕ:
Мĕкĕрленчĕ, мĕкĕрленчĕ,
Плугĕ уншăн ытла та куштан;
Тапранмаст çав—çавах вырăнтан.
—Чорт!—тет шăши,—шуйтан:
Леш пăйав канçĕрлет çав унта!
Пăйава шăлсемпе касса татрĕ,
Плуг çавах вырăнтан тапранмарĕ.
Арлан лахлатса кулса йачĕ,
Шăшине пит аван ăс-тăн пачĕ.
—Ех, болтун, пуç пекки пур пулсан -
Ĕç тумасăр малтан ан мухтан!

* *
*

Ытла та вĕçкĕн хăшĕсем,
Чĕлхисем питĕ вăрăм вĕсен.
Чăн ĕçре вĕсене сурса тар,
Шăширен курма çук пархатар.

Марк Аттай.

1935 ç. Пединститут.

---

## Начар коњуха

Елĕк районĕнчи Алкукасси колхозĕнче коњухсем лашасене йапăх пăхаççĕ. Лашисем начар, çуракине тухма йурăхлă мар.

**Лаша:**—Ах, ес мана кӳлетĕн те, мана тăрантарманшăн сана хăвна кам кӳлсе çаварлăхласа лартĕ-ши?



Мышшентойра (Ишлей р.) „Ударник“ колхозăн çуранине катăрлесес ĕç пит йапăх пырать. Пайташ



**„Капкăна“ килнĕ васкавлă телеграммă:** „Ударник“ колхоз председателĕ ударлă ĕçлесе 10 гектар çине йур тытнă, кĕл пухма тин анчах шухăшлать, вăрлăхсем суртламан, зайом укçи пухассине илсен 35 процент тултарнă, анаслассине илсен 120 процент тултарнă (мĕнле анасланине ӳкерчĕк туса радио тăрăх йарса паратпăр). Анаслассине кун пекех пурнăçа кĕртсе пырсан, çуркуннеччен çăварĕ çурăлса кайасран хăраса, анаслама пăрахтаракан емел йама ыйтатпăр.

Кашни культурлă колхозник килĕнчех „Капкăн" журнал пулмалла!




— Е-е, ан та шухăшла епĕ сана качча пырассине. Есĕ хытă çын—„Капкăн“ та çыранса илместĕн.

— Илетĕп. Ыранах 3 тенкĕ тўлесе çулталăкĕпех илетĕп.

„Капкăн“ хакĕ хаклă мар: 3 уйăха—75 пус, 6 уйăха—1 т., 12 уйăха—2


Сдано в производство 26-I—35г.
Подписано к печати 13-II—35 г.
Секретарь и вып. редактор И. ИЛЛАРИОНОВ.
Ответ. редактор: ГУР. ТИТОВ.
Ст. ф. б. 200×280. Об'ем 1,25п. л. Издательство газ. „Канаш“
Чувашглавлит № 64. Типогр. № 1 Чувашгиза г. Чебоксары, ул. Чувашская, 15. Заказ № 221. Тираж 2850 экз

# ТРАККАПА ПРАККА.



1. Сивĕ хĕл те персе çитрĕ,
Ĕçсĕр çук вĕт пурăнма.
Траккапа Пракка шут тытрĕç
Вут касмашкăн çырăнма.



2. „Хатĕр-матĕр" пурте хатĕр
Тракка чикрĕ ман куршак.
Ав Пракка та вăљтăр-ваљтăр
Чиксе хучĕ кашăка.



3. Кăнтăрла тĕлне шăп çитрĕç
Тантăшсем пирвн вăрмана.
Ĕçлес умĕн чыхрес, чыхрĕç,
Чыхрĕç выçă хырăма.



4. Тăрас мар ахаљ, Праккаçăм,
Аťа, турт ха!—тет Тракка.
Татăймасăрах куҫкаçăн.
Хăвăртрах!—тейет Пракка.



5. —Мекĕрлен!—çуйхаť Праккийĕ.
—Пусарах!—хашкаť Тракки.
Улăм мар иккен йуманĕ,
Ĕç тухмасť вĕсен такки.



6. Шăм-шаксем вес лутăркачĕç
Çук, ăнмарĕ вĕсен ĕç:
Пăчăк хыттăн тăринк!-летрĕ,
Ав вĕсем гаçта вĕçеç.



7. Тантăшсем йулхав пулмарĕç,
Вăрманта вĕт ĕç кумай.
Пĕр турат çинче Праккийĕ,
Ав, тепри çинче—Тракки.



8. Туртăпа касма ансат-мĕн,
Йанăраť вăрман; тук так.
— Кам малтан касса антарĕ,
Кам турат касма ăста?



9. Кам есрелĕ кăна кĕтиĕ.
Çук, кĕтмен ку инкеке.
Кĕрт ăшне чăмаť Тракка,
Çакăнса йулаť Пракка.